Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

71 (8137) № * Юн кун, 2013 ҫулхи авӑн (сентябрь) уйӑхӗн 25-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Чи хаклӑ сӑмаха тивӗҫ

Сентябрӗн 27-мӗшӗ – Воспитатель кунӗ

*«Ачасем аслисенчен кунсерен мӗн те пулин ҫӗннине, ыррине, тӗслӗх илмеллине кӗтеҫҫӗ. Ҫакна шута илсе хамӑр патӑмӑрти ачасен кашни кунне интереслӗ тума тӑрӑшатпӑр», – теҫҫӗ Москакассинчи «Колокольчик» ача садӗнчи воспитателе пулӑшакан Галина Комисева тата Наталия Мироновӑпа Прасковья Лебедева воспитательсем (сӑн ӳкерчӗкре сулахайран сылтӑмалла). Ачасен шухӑш-кӑмӑлне туйма вӗренсе ҫитнӗ хастар ӗҫченсене вара шӑпӑрлансем кулленех чи хаклӑ парнепе – хӑйсен юратӑвӗпе – савӑнтараҫҫӗ.*

**Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**



## Ырӑ туни ырӑпах таврӑнать

**Ыр кӑмӑллӑх**

Амур облаҫӗнче тата Хабаровск крайӗнче пурӑнакансем шыв илнине пула епле пысӑк инкек тӳсни пирки пурте пӗлетпӗр. Районти предприятисемпе организацисем, уйрӑм ҫынсем паян вӗсене пулӑшма пултараҫҫӗ. Ҫавна валли ятарлӑ счетсем уҫнӑ. Ҫак вӑхӑта инкеке лекнисене пулӑшма районӗпе 100 пин тенкӗне яхӑн укҫа куҫарса панӑ. Ҫынсен инкекне ӑнланса укҫа-тенкӗ тӗлӗшпе пулӑшма май тупнисем шутӗнче ҫак вӑхӑта район администрацийӗ, Муркашла Мӑн Сӗнтӗр райповӗсем, РФ Пенси фончӗн районти управленийӗ, ватӑ ҫынсемпе инвалидсен Йӳҫкассинчи интерначӗ, вылӑх чирӗсемпе кӗрешекен Муркашри станци, хуҫалӑхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийӗ, район хаҫачӗн редакцийӗ.

Чӑвашсем мӗн авалтанпах ыр кӑмӑллӑхпа, ҫынсен хуйхи-суйхине ӑнланма пӗлнипе, пулӑшма тӑрӑшнипе палӑрса тӑнӑ. Ҫак енсене хамӑрта ҫухатас марччӗ. Районти ытти предприятисемпе организацисем, ял тӑрӑхӗсем ку енӗпе пусӑрullӑрах пуласса шанас килет. Укҫатенкӗ куҫармалли счетсене пӗлтеретпӗр.

**Амур облаҫӗнче пурӑнакансене пулӑшма:**

ИНН 2801123618
КПП 280101001
Получатель УФК по Амурской области (минфин АО л/сч 04232003600)
Р/сч 40101810000000010003
Банк ГРКЦ ГУ БАНКА РОССИИ ПО АМУРСКОЙ ОБЛАСТИ
г. Благовещенск БИК 041012001
ОКАТО 10401000000
КБК 015 2 07 02030 02 0000 180

«Назначение платежа» тенӗ вырӑнта обязательнӑй йӗркепе «Добровольные пожертвования на ликвидацию последствий наводнения в Амурской области в 2013 году» тесе кӑтартма ан манӑр.

**Хабаровск крайӗнче пурӑнакансене пулӑшма:**

УФК по Хабаровскому краю (Правительство Хабаровского края, л/сч 05222000060)
ИНН 2700000786
КПП 272101001
Р/сч 40302810600002000233
В ГРКЦ ГУ Банка России по Хабаровскому краю
БИК 040813001
ОКАТО 08401000000

«Назначение платежа» тенӗ вырӑнта «Добровольные пожертвования на ликвидацию последствий наводнения в Хабаровском крае» тесе кӑтартмалла.

Фермӑсене хӗле епле хатӗрленине тӗрӗслении пӗтӗмлетӗвӗ

## Агробизнес аталанӑвӗ куллен тимлӗх ыйтать

***Ҫумӑрпа пуян авӑн уйӑхӗ вӗҫленсе пырать. Иртнӗ кунсенче обществӑлла вылӑх-чӗрлӗх фермисене хӗле епле хатӗрленнин тӗрӗслевӗсем вӗҫленчӗҫ. Апла пулин те хресчен ӗҫра куна вылӑх апачӗ хатӗрлессипе тӑрӑшнӑ ҫу кунӗсем, «хир карапӗсем» каҫалӑк хыҫҫӑн каҫалӑк тунисем паян та куҫ умӗнчех. Ял хуҫалӑхне аталантарассипе ыранхи куна пӑхса ӗҫлекенсем пӗр ӗҫе те кая хӑвармарӗҫ. Тӑрӑшуллисем йывӑрлӑхсене ҫӗнсех ытлӑ-ҫитлӗ вылӑх апачӗ янтӑларӗҫ, хатӗр апатӑн пахалӑхне тӗрӗслеттерчӗҫ, сарай-витесемпе вылӑх-чӗрлӗхе хӗле хатӗрлерӗҫ т. ыт. те. Ума лартнӑ тӗллевсем пурте пурнӑҫланчӗҫ-и? Ҫитес хӗл кунӗсем экономика аталанӑвӗн никӗсне ҫирӗп алӑра тытса хӑварма май парӗҫ-и? Ҫак ыйтусем ҫине ирттернӗ тӗрӗслевсем ҫирӗп хурав пачӗҫ. Кӗрхи кун ҫу ӑшши пирки шутламалли вӑхӑт мар ӗнтӗ. Ҫавӑнпа та хӗле хатӗрленессипе обществӑлла вылӑх-чӗрлӗх патӗнче мӗнле ӗҫсем туса ирттерни пирки калаҫӑва район администрацийӗн экономикӑпа АПК аталанӑвӗ пайӗн тӗп эксперт специалистне Татьяна АЛЕКСЕЕВӐНА чӗнтӗмӗр.***

**– Татьяна Александровна, хӗл кунӗсенчи продуктивлӑх ҫуллапа кӗркунне вылӑх апачӗ янтӑлассипе ҫаврӑнӑҫуллӑрах ӗҫленинчен нумай килет. Ҫакӑ ялта пурӑнакан тата хӑйӗн хушма хуҫалӑхӗнче вылӑх-чӗрлӗх тытакан кашни ҫыннӑнах паллӑ. Ӗне сӗчӗ чӗлхи ҫинче тени те ҫавнах ҫирӗплетет. Ҫывхаракан хӗл кунӗсем вылӑх апачӗ тӗлӗшпе чухӑн пулмӗҫ-и? Сивӗ хӗл кунӗсем кама ытларах шиклентерӗҫ тесе шутлатӑр?**

– Вылӑх-чӗрлӗхрен ытларах продукци илесси апат-ҫимӗҫ хисепӗпе тата унӑн пахалӑхӗпе ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та ҫулсеренех хӗле хатӗрленнӗ вӑхӑтра ҫак ыйтусем ҫине пысӑк тимлӗх уйӑратпӑр. Хамӑр патӑмӑра тӑратакан оперативлӑ кӑтартусене ӗненес пулсан авӑн уйӑхӗн 20-мӗшӗ тӗлне районти пӗр хуҫалӑх производство кооперативӗсемпе агрофирмӑсем, чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑсем тата хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем пурӗ 7229 тонна (140 процент) утӑ, 14683 тонна (98 процент) сенаж, 5174 тонна (38 процент) силос, 90 тонна витаминлӑ курӑк ҫӑнӑхӗ янтӑланӑ. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче вылӑх-чӗрлӗхе тупӑшлӑ хӗл каҫарма вара пире сахалтан та 5,2 пин тонна паха утӑ, пахалӑхпа ыйту кӑларса тӑратман 15 пин тонна сенажпа 13,5 тонна силос, 6 пин тонна ытла улӑм, чӑх-чӗпе шутламасӑр 17,9 пин тонна фуражлӑх тырӑ кирлӗ. Вӗсемсӗр пусне «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикине вылӑх хӗл каҫма хӑйне 9 пин тонна, «Фаворит» обществӑна 300 тонна ытла тырӑ кирлӗ. Кун ҫумне иртнӗ ҫулхи куҫӑмлӑ фондри вылӑх апачӗ 2,3 пин тонна апат единици пуррине хушар. Пӗтӗмлетсе пӑхсан (кроликсемпе чӑх-чӗпе шутламасан) районти ҫӗр ӗҫченӗ ҫитес хӗл валли пӗр условнӑй вылӑх пуҫне 34,5 центнер апат единици хатӗрленӗ.

Вылӑх апачӗ янтӑлас ӗҫ пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче халӗ те чарӑнман-ха. Кукурузӑран силос хывассипе паян Ильич яч. хис., «Ударник» хуҫалӑхсенче, «Путь Ильича» агрофирмӑра ӗҫлеҫҫӗ. Нумай ҫул ҫсекен курӑксенчен силос хывса хӑварассипе Е. Андреев яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативӗнче тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫак тимлӗх хӗле кӗриччен татах 7 пин тонна ытла силос янтӑлама май парасса шанатпӑр.

(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.)

**РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран**

### Фермерсене йыхравлаҫҫӗ

Федерацин «Раҫҫей менеджментпа агробизнесӑн инженери академийӗ» патшалӑх бюджет вӗренӳ учрежденийӗ Раҫҫей Ял хуҫалӑх министерствипе пӗрле фермер ӗҫне тытӑнакансене грантсем илме пулӑшас тӗллевпе тӳлевсӗр вӗренӳ курсӗсене йӗркелеҫҫӗ.

Курссем пирки тулли информацие Чӑваш Ен Ял хуҫалӑх министерствин официаллӑ сайтӗнче «Начинающий фермер» баннерта «Федеральная образовательная инициатива «Начинающий фермер» пайра вырнаҫтарнӑ.

### Налука килтен тухмасӑрах тӳлетпӗр

Иртнӗ ҫулшӑн ҫӗр налукӗпе уйрӑм ҫынсен пурлӑх налукне ноябрӗн 1-мӗшӗччен, транспорт налукне ноябрӗн 5-мӗшӗччен тӳлемелли пирки хыпарланӑччӗ. Хӑвӑрӑн налук парӑмӗ пирки пӗлсе тӑрас тесен налук тӳлекен уйрӑм ҫынсен харпӑр хӑй кабинечӗн электрон сервисӗпе усӑ курни уйрӑмах меллӗ. Налука вара банк уйрӑмӗсенче кӑна мар, килтен тухмасӑр та тӳлеме пулать. Партнер банксен электрон сервисӗпе усӑ курмалла кӑна. Налуксене онлайн-тӳлев мелӗпе те парса татма май пур. Ҫапла тӑвас тесен www.nalog.ru «Заплати налоги» сайтра интернет-сервиспа усӑ курӑр.

### Ачасен те правӑсем пур

Ачасен прависене хӳтӗлессин ыйтӑвӗ яланах ҫивӗч тӑрать. Апла пулсан ку тӗлӗшри тивӗҫлӗ пӗлӳ ашшӗ-амӑшӗсене те, вӗсен ачисене те кирлӗ. Ҫавна шута илсе Муркаш шкулӗнче 6-мӗш класра вӗренекенсемпе «Ачалӑх хӳтлӗхре» ятпа право информацийӗн сехетне ирттернӗ.

### Муркашсен кӑтартӑвӗ – 15,3 килограмм

Ҫак вӑхӑта районти ял хуҫалӑх организацийӗсенче сумалли ӗнесен шучӗ 2214 пуҫ шутланать. Кашни ӗне пуҫне вӑтамран районӗпе 10,3 килограмм сӗт суса илеҫҫӗ. Чи пысӑк кӑтарту Е. Андреев яч. хис. хуҫалӑхра – 15,3 килограмм. Талӑкра пӗр ӗне пуҫне 12 килограмм ытла сӗт сӑвакансем шутӗнче Ильич яч. хис., Суворов яч. хис. хуҫалӑхсем, «Путь Ильича» агрофирма. «Свобода», «Ударник», «Восток», Чапаев яч. хис. хуҫалӑхсенче вара вӑтам сӑвӑм 8 килограма та ҫитеймест.

### Ҫамрӑксене – вӑхӑтлӑх ӗҫ

Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центр пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ 14 – 18 ҫулсенчи ҫул ҫитмен ҫамрӑксене вӗренӳрен пушӑ вӑхӑтра ӗҫ вырӑнӗпе тивӗҫтерессипе ҫине тӑрса ӗҫлет. Ҫакӑ вӗсемшӗн вара питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Яш-кӗрӗмӗн каникул кунӗсенче, султалӑк хушшинче вӗренӳрен пушӑ вӑхӑтсенче хӑйсене ӗҫре тӗрӗслесе пӑхма май пур. Ҫул ҫитменнисене ытларах чухне урамсемпе ял, шкул территорийӗсене тасатса тирпейлес, ача-пӑча площадкисене, спорт сооруженийӗсене, шкулсенчи сӗтел-пукана юсас, ветерансемпе инвалидсене тата ватӑ ҫынсене пулӑшас ӗҫсене явӑҫтарма, шкул лесничествисенче ӗҫлеттерме пултараҫҫӗ.

### Черетлӗ ӑмӑрту – Тойкилтӗре

Сентябрӗн 28-мӗшӗнче Тойкилтӗ шкулӗн тренировка трасси ҫинче асӑннӑ шкул выпускникӗн, Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ врачӗн, республика Патшалӑх Канашӗн виҫӗ созыври депутачӗн Владислав Григорьевич Даниловӑн парнисене ҫӗнсе илессишӗн районти шкул командисем хушшинче ҫӑмӑл атлетика кросӗ енӗпе ӑмӑрту иртет. 1996 ҫулта ҫуралнисем тата кӗҫӗнреххисем 1 километр дистанципе вӑй виҫеҫҫӗ. Мала тухнӑ команда куҫса ҫӳрекен кубока, призлӑ вырӑн йышӑннисем грамотӑсемпе парнесене, уйрӑм участниксем медальсемпе грамотӑсене тата парнесене тивӗҫеҫҫӗ. Ӑмӑрту 11 сехетре пуҫланать.

**В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**

**Ҫырӑнтару – 2014**

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2014 ҫулхи январьтен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Хаҫата 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 216 тенкӗ те 30 пус.**

**Хаклӑ вулаканӑм! Малашне те пӗрле пулар!**

# Сиенлĕ йăласемпе пĕрле кĕрешер

**Райадминистрацире**

Район администрацийĕнче сентябрĕн 20-мĕшĕнче наркотикпа усă курассине хирĕç кĕрешес ĕç комиссийĕн тата право йĕркине пăсассине асăрхаттарас ĕç комиссийĕн ларăвĕсем пулнине пĕлтернĕччĕ. Вĕсем «çавра сĕтел» мелĕпе иртрĕç.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту наркотикпа усă курассине хирĕç кĕрешесси пирки пулчĕ. Ун пирки шалти ĕçсен пайĕн ертӳçин çумĕ Виталий Григорьев тата тĕп больница наркологĕ Лариса Иванова каларĕç.

Çулталăк пуçланнăранпа районта наркотикпа усă курнă 4 преступление регистрациленĕ, 14 çын тĕлĕшпе медицина тĕрĕслевĕ ирттернĕ. 5 хушма хуçалăхра мăкăнь ӳстернĕ факт тупса палăртнă. «Мак – 2013» операци ирттернĕ. Сиенлĕ йăлапа кĕрешессинче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен те аякра юлмалла мар, ку тĕлĕшпе саккуна малалах пăснисем те кулленхи тимлĕхре пулмалла. Уйрăм çынсен те сывă пурнăç йĕркишĕн тăрăшмалла, преступлени, ултав çулĕ çине тăнисене вăхăтра асăрхаттармалла. Çавăн чухне кăна ырă пуçару витĕмĕпе усал йăлапа выçăнлă кĕрешме пултарăпăр.

Çул çитмен çамрăкăн кăмăлтуйăмĕ питĕ вылянчăк. Çавна май вăл çăмăллăнах усал йăлапа туслашма пултарать, вĕсем çине аслисем те витĕм кӳреççĕ. Çакна тĕпе хурса кĕçĕн ăру тĕлĕшпе тимлĕх ытларах уйăрмалла – вĕсем пирĕн ачасем тата пуласлăх. Комисси членĕсем пĕр шухăшлă пулса психологи тесчĕн мелне вăя кĕртме палăртрĕç. Анкетăна алла илнĕ май ача усал йăлапа усă курни пирки е çакăн пек кăмăл пулни çинчен пĕлтерет. Кунта, паллах, ирĕксĕрлени çук, çакă анонимлă майпа иртмелле, çавăнпа та тĕрĕс хурава вăхăтра пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çапах та чи малтан ача воспитанийĕшĕн ашшĕ-амăшĕ ответлă, апла пулсан вĕсен тыткаларăшĕпе, кăмăл-туйăмĕпе кăсăкланмалла.

Черетлĕ ыйту район территорийĕнче «Сывлăхшăн тата хамăр ачасен хăрушсăрлăхĕшĕн» профилактика акцийĕ иртересси пулчĕ. Ун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Лилия Тарасова каларĕ. Çулсерен иртекен акци сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланчĕ, çулталăк вĕçлениччен пырать. Районта унăн ĕç планне çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Акцие Раççей Федерацийĕн наркотиксен çаврăнăшне контрольлекен служби иртерет. Асăннă ĕçĕн тĕп тĕллевĕ – сывă пурнăç йĕркине пăхăнассине йăлана кĕртесси, пируспа, эрехпе, наркотикпа усă курассине сивлесси.

Вĕренӳ учрежденийĕсенче сывлăх сехечĕсем, калаçусем, ăмăртусем иртеççĕ. Унта сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене, сывлăх сыхлав учрежденийĕсен, шкул библиотекисен ĕçченĕсене явăçтараççĕ.

Республикăри ĕç опычĕпе усă курса комисси членĕсем Муркашри автостанцире тата район администрацийĕн çуртĕнче ятарлă ещĕк вырнаçтарма йышăнчĕç. Унта наркотикпа, алкоголь суррогачĕпе суту-илӳ, усă курнă фактсем пирки çырса пĕлтерме пулать, анонимлă та юрать.

Эрехпе сиенленсе больницăна сиплеве килнисем йышлансах пыраççĕ. Ун витĕмĕпех хăшĕ-пĕрин кун-çулĕ те вăхăтсăр татăлать, суицид факчĕсем ӳсни те пурне те шухăшлаттарма тивĕç. Арçынсенчен хĕрарăмсем те аякра юласшăн мар пулас, нарколог патне учета тăракансем те йышлă, шута илменнисем татах та ытларах пулни вара иккĕлентермест. Шел пулин те, пĕр çула çитмен ачасем ку таранчен 5-ĕн пурнăçран уйрăлнă, республика шайĕнче ку кăтарту пысăккисен шутĕнче. Ку синкерсенче те эрех витĕмĕ пур. Çак самантсем пирки тĕп больницăн тĕп врачĕ Владислав Данилов пĕлтерчĕ.

Районти уйрăм предпринимательсем «фанфурикпа» сутуилӳ туни – чи йывăр ыйтусенчен пĕри. Çакă вара çынсен сывлăхĕшĕн уйрăмах пысăк хăрушлăх кăларса тăратать, çавăн пекех çак «вилĕм» çемье бюджетне те палăрмаллах çӳхетет. Хăш-пĕр предпринимательсем асăннă комисси членĕсен тата ответлă ытти ĕçченсен ыйтăвнесĕнĕвне шута илчĕç, унпа сутуилӳ тума пăрахрĕç. Район администрацийĕпе шалти ĕçсен пайĕн çурчĕсем хушшинче вырнаçнă аптека тата Заводская урамри аптекăра çав-çавах уйрăм предпринимательсем «вилĕм» сутаççĕ, çапла майпа бизнесменсем çын куççулĕпе кĕсйисене хулăнлатаççĕ. Кун йышши фактсем ытти суту-илӳ точкисенче те пур. Çавна май «тӳрĕ» чунлă предпринимательсене комиссие чĕнме тата вĕсен ĕç-хĕлне пăхса тухма йышăнчĕç. Асăннă ответлăха район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕ çине хучĕç.

Алкоголизм сиенĕ тата ун витĕмĕпе тунă преступлени йышĕ ӳссех пырать. Çавна май районта ведомствăсем хушшинчи алкоголизмпа кĕрешессин профилактика ĕçĕсен ятарлă планне йышăннă. Унпа район администрацийĕ çумĕнчи çул çитменнисемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссин ĕç-хĕлне йĕркелекен секторăн ертӳçи Лариса Петрова паллаштарчĕ.

Ӳсĕрле тунă преступлени шайĕ пысăккине палăртрăм ĕнтĕ, вăл 44,5 процентпа (иртнĕ çул 41,2 проц.) танлашать. Республика кăтартăвĕ вара – 39,0 процент, акă мĕнпе «чапа» тухатпăр эпир. Çемьери харкашусем те йышлансах пыраççĕ тата ытти те. Сăлтавĕ мĕнре-ха? Ĕçсĕрлĕх тата эрехпе айкашни!

Çавăн пекех Катькас, Уйкас Янасал, Йӳçкасси ял тăрăхĕсен ĕçченĕсем асăннă ыйтусем тавра калаçрĕç, вĕсенче преступлени шучĕ пысăк, вăл шутра уйрăмах йывăррисем те. Тата чылай ыйту хускалчĕ ларура.

**Р. МАКАРОВА.**

**Саламлатпăр**



Аннене, хунямана, асаннене – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Елена Васильевна ВЛАДИМИРОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей те савăнăç. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, пускилсем, ял-йыш.**



Пирĕн юратнă анне, ытарайми асанне, кукамай – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Ирина Яковлевна ПЕТРОВА** паян 90 çул тултарчĕ. Паян эпир юратнă çыннăмăра сумлă юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Юрататпăр, саламлатпăр,
Чыс тăватпăр кăмăлтан.
Ырлăх-сывлăх çеç сунатпăр,
Çавăнатпăр эс пуртан.
Ăнăçу, телей сунатпăр,
Ырă та таса кун-çул,
Сывлăху сан çирĕп пултăр,
Тултарсассăн та 100 çул!

**Саламлаканĕсем: пĕтĕм кил-йыш, тăванĕсем.**

Ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра 20 çул тĕп бухгалтерта ĕçлекен **Екатерина Эрастовна ЗАМЯТИНĂНА** иртнĕ кунсенче 55 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Кашмашра çуралса ӳснĕ хĕр вăтам шкул пĕтерсенех хăйĕн ĕç ĕмĕрне тăван хуçалăхпа çыхăнтарнă. Ятарлă пĕлӳ илнĕ хыççăн Екатерина Эрастовна 35 çул каялла хуçалăхăн бухгалтерийĕнче ĕçлеме пуçланă. Кашни ĕçе вăхăтра пурнăçлама хăнăхнăскер, аслă ĕçтешĕсенчен вĕренсе пынă, пĕлĕве ӳстернĕ. Çапла вара 1993 çултанпа вăл «Свобода» хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕнче вăй хурать, шутлав ĕçĕнче çамрăксене ăс парать, йывăрлăхра пулăшу алли тăсать. Пурнăçри çак паллă кун ячĕпе эпир сана чĕререн саламлатпăр. Эсĕ ĕçрен ютшăнманни, ачусемпе çывăх тăванусене тата ĕçтешĕрсемпе хуçалăх ĕçченĕсене пулăшма ялан хатĕр пулни тата вăл çитнĕ чухлĕ пулăшни сана Çĕр çинче Турă панă çул-йĕр тесе шутлатпăр. Çак çулпа утса санăн татах нумай çул ырă курса, халăха савăнтарса пурăнмалла пултăр. Эсĕ çакна тивĕç.

**Салампа: «Свобода» хуçалăх правленийĕпе ĕçтешĕсем, хуçалăхра вăй хуракансем.**

Çĕр ĕçĕнче вăй хураканăн пур ĕçе те тума пĕлмелле. Çак сăмахсене эпир ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра 1978 çултанпа бухгалтер пулса ĕçлекен **Алевтина Ивановна АЛЕКСАНДРОВА** пиркиех калатă тесе шутлатпăр. Пирĕн ĕçтешĕмĕр шут ĕçĕнче ответлăха туйса тимленипе пĕрлех килти хушма хуçалăхне аталантарассипе те ялта пурăнакансемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Алевтина Ивановнăна эпир хуçалăх ĕçченĕсемпе хăйсен чĕлхипе, ялта пурăнаканпа ял çынни пек калаçма пĕлнишĕн юрататпăр, 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламласа ырлăх-сывлăхпа вăрăм кун-çул сунатпăр.

Бухгалтери ĕçĕнчи 35 çул вăл 35 кун мар. Çак хушăра йывăрри те, çăмăлли те пĕрре мар пулнă пулĕ. Анчах вĕсем сана пуç устарман, ытлашши çĕклентерсе те яман. Юбилей ячĕпе саламланă май паян эпир çавăншăн санпа мухтанатпăр. Вăрăм ĕмĕр сĕннĕ мăй пĕрле пулса ĕçре те, çемьере те телей, ăнăçу, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: «Свобода» хуçалăх правленийĕпе ĕçтешĕсем, хуçалăхра вăй хуракансем.**

# Ирина Яковлевна 90 çул тултарчĕ

Паян, сентябрĕн 25-мĕшĕнче, Ярапайкасси ял тăрăхне кĕрекен Итакачкасси ялĕнче пурăнакан Ирина Петрова 90 çул тултарчĕ. Апла пулин те вăл яш чухнехи пекех вăр-вар та тирпейлĕ тата тарават. Иртнĕ çулсене аса илме пуçларĕ те тапхăр хыççăн тапхăр пĕр иккĕленмесĕр-улăштармасăр каласа кăтартрĕ. Çапла вара вăл ăс-тăн енчен питĕ çивĕч пулни курăнчĕ, ахальтен мар ĕнтĕ çирĕм çул хушши сутуçăра тимленĕ, ку ĕç вара çирĕп те тĕрĕс шута юратать.

...Ирина мĕн ачаллах ăс-тăн çивĕчлĕхĕпе, правурлăхĕпе ытисенчен уйăларах тăнă. Тантăшĕсемпе вăййа тухсан е вĕсемпе ĕçленĕ хушăра та наччас тĕрлĕ шутлав-пуçватмăш шухăшласа кăларнă. Вăр-варлăхĕпе вара арçын ачасенчен пачах та аякра тăман, хăшне-пĕрне вылямалла тесе тĕрткелесе те илнĕ, йывăç çине тупăшмалла улăхнă чухне ытисене кая та хăварнă. Çак вăр-варлăх унран çулсем иртнĕçемĕн те уйрăлман. Çавăнпах та пулĕ ăна чылайăшĕ кăмăлланă, хăшĕ вара кин пуласси вырăнне те пăхса хунă.

Вăхăт вара малаллах шăвать, Ирина ӳссе çитсе хĕр пулать, анчах та тĕнчене хăрушă вăрçă кисретет. Çапла вара вăл ытисем пекех окоп чавнă çĕре тата ытти ĕçе хутшăнать.

– Пирĕн çамрăк пурнăça усал тăшман çапса хуçрĕ çав. Мĕн чухлĕ çын кун-çулĕ таталчĕ пулĕ, çемьесем те арканчĕç. Выçăллă-тутăллă пурăнма, ĕçлеме тиврĕ, тăхăнмалли çук пулсан та сиввине те пăхман, йăлтах çĕнтерĕве



**Вата çынсен кунĕ умĕн**

çывхартассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă, – аса илет сумлă çулхи кинемей.

Паллах, çав нушана аса илме ăна çăмăл мар, анчах та чăтса ирттернĕ кун-çул, сывăх çынсен çухатăвĕ, ун чухнехи ытти самант ĕмĕрлĕхех куç умĕнче. Халĕ Ирина Яковлевна тавра хăтлăх хуçаланать: туслă та тарават кил-йыш тата ача-пăча тимлĕхĕ. 90 çула çитнĕ пулин те кинемей ĕçрен уйрăлман-ха, урăхла вара вăл пултараймасть. Кирек епле ĕçе те тирпейлĕ тăваканскер тĕрлĕ апат-çимĕç, кукăль-çăмах пĕçерет, çăм арласа алсиш-нуски çыхать, вăхăта ахаль ирттересси уншăн пачах та ют. Пĕрле пурăнакан Анатолий Константинович ывăлĕпе Алевтина Васильевна кинĕ тата вĕсен ачисем кил тĕпкĕчĕ пекех вăр-вар. Вĕсем – Ирина Яковлевнăн ырă ĕçĕсене тăсаканĕсем. Апла пулсан – 90 çул, сумлă çул – пуранни пĕлтерĕшĕ пысăк.

Ирина Яковлевна, эпир те сире паллă кун ячĕпе саламлатпăр. Ватлăх кунĕсем хальхи пекех хăтлă пулччăр, сирĕн тавра тимлĕх хуçалантăр. Эсир – ытисемшĕн яланхиллех ырă тĕслĕх.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Электрон услугăсем**

# Пуриншĕн те меллĕ, ансат

Кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикин территорийĕнче нумай функциллĕ центрсене 26 регистрациленĕ. Вĕсенчен 25-шĕ «81 чӳрече» мелĕпе ĕçлет. Нумай функциллĕ 21 центр яланхи режимпа, 4-шĕ тест режимĕпе ĕçлеççĕ. Кăçал çулталăк пуçланнăранпа асăннă центрсем 139,7 пин услугăпа тивĕçтернĕ. Вăл шутран федераци услугисемпе 49,8 пин, республика услугисемпе 30,2 пин тата муниципалитет услугисемпе 18,1 пин. Центра пыракансене 16 пин консультаци панă.

Çынсем ытларах усă куракан услугăсем шутĕнче куçман пурлăх харпăрлăхĕн правине регистрациленессипе çыхăннисем (Росреестр услугисем). Ку услугăсемпе республикăра пурăнакан 4915 çынна тивĕçтернĕ. Çавăн пекех нумай функциллĕ центрсене федерацин миграци службин управленийĕн услугисемпе усă курас текенсем те сахал мар пыраççĕ. Раççей гражданинĕн тата ют çĕр-шыва кайма паспорт илессин ыйтăвĕсемпе центрсене 9316 çын, хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен черетне çыранассин ыйтăвĕпе 6728 çын пынă.

2013 çул вĕçленнĕ тĕле нумай функциллĕ 26 центрта граждансене «116 чӳрече» мелĕпе йышăнма тытăнмалла.

Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри муниципаллă кашни районтах ял тăрăхĕсенчи 119 библиотекăра «пĕр чӳрече» мелĕпе услугăсемпе тивĕçтерме тытăннă. Хальлĕхе вĕсенче 304 çынна муниципалитет услугисемпе тивĕçтернĕ. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вара ял библиотекисенче «232 чӳрече» мелĕпе патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессине йĕркелесе çитерме пăхнă.

Сăмах май. Муркашра çынсене патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен центр çулталăк каялла уçăлнă. Малтанхи вăхăтра кунта çынсене «пĕр чӳрече» мелĕпе йышăннă пулсан, хальхи вăхăтра услугăсемпе «вичĕ чӳрече» мелĕпе тивĕçтереççĕ. Центрта муниципалитетăн 29 услугине усă курма май пур. Çывăх вăхăтрах патшалăх услугисене те тивĕçтерме тытăнĕç. Çак тапхăрта çĕршер çын центр тивĕçтерекен услугăсемпе усă курма пултарнă та ĕнтĕ. Центртах юридици пулăшăвĕ тӳлевсĕр парассине те йĕркеленĕ, консультаци илме пыракансем те сахал мар.

Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса районти 9 библиотекăра центрăн филиалĕсене уçнă, вĕсем граждансенчен муниципалитет услугисемпе тивĕçтерме документсем йышăнма тытăннă. Сентябрь уйăхĕ вĕçлениччен вара татах 6 библиотекăра «пĕр чӳрече» мелĕпе граждансене муниципалитет услугисемпе тивĕçтерме тытăнмалла. Библиотека сотрудникĕсем хальхи вăхăтра услугăсемпе электрон мелĕпе тивĕçтерме патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленĕ, нумай функциллĕ центрăн автоматизациленĕ информаци системипе ĕçлеме хăнăхаççĕ.

# Старта хăюллисем тухаççĕ

**Спорт**

Иртнĕ вырсарни кун Муркаш стадионĕнче халăх йышлă пулчĕ. Спорта кăмăллакансем Олимп чемпионкин Валентина Егоровăн парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетикăн республикăри уçă ăмăртăвĕн тата Наци кросĕн старчĕсене тухрĕç.

Пĕтĕмпе ăмăртусене 669 спортсмен хутшăнчĕ, вăл шутра аслисен 21 команди, шкул ачисен 22 команди тата 5 ача сачĕн ушкăнĕ.

Старта тухакансене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев саламларĕ, стартсенче ăнăçусем сунчĕ. Çавăнпа пĕрлех патшалăх физкультурăпа спорта аталантарассипе нумай ĕç тунине палăртрĕ. Муркаш районĕнчен паллă спортсменсем нумай тухнине каласа вĕсенчен тĕслĕх илме сĕнчĕ.



Чи малтан пĕчĕккисем старта тухрĕç.



Паллă спортсменсем – пирĕн ентешсем Вера Соколовăпа Нина Охотникова.



Пьедестал çинче – тĕп шкул командисем: Шетмĕпуç, Сосновка, Тойкилтĕ.



Пуçлăхсемпе вĕсен çумĕсем те ыттисене хăйсен тĕслĕхĕпе хавхалантарчĕç.

Çавăн пекех паллă спортсмен Нина Охотникова, РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Юрий Егоров спортпа туслă пулма сунчĕç.

Чи малтан старта пĕчĕккисем (2007 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем) тухрĕç. Нумайăшĕшĕн çак ăмăрту пĕрремĕш пулчĕ ĕнтĕ. Хăйсен пепкисемшĕн ашшĕ-амăшĕ пăлханни тупăшăва çивĕчлетрĕ кăна. Хĕр ачасенчен финиша пĕрремĕш Карина Григорьева («Березка» ача сачĕ) çитрĕ. Иккĕмĕшĕ – Анастасия Егорова, виççĕмĕшĕ – Надежда Кириллова (иккĕшĕ те «Путене» ача садĕнчен).

Арçын ачасенчен Константин Кроликов («Солнышко») çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшĕ – Илья Васильев («Солнышко»), виççĕмĕшĕ – Евгений Павлов (Шурча).

**Унтан 2004 – 2006 çулсенче çуралнисем ăмăртрĕç. Вĕсен результачĕсем çапла:**

***Хĕр ачасем***

1-мĕшĕ Даша Ашпарова (Туçи Мари районĕ),
2-мĕшĕ Дарина Волкова (Муркаш шкулĕ),
3-мĕшĕ Даша Антонова (Чуманкасси).

***Арçын ачасем***

1-мĕшĕ Данил Обрысков (Ярапайкасси),
2-мĕшĕ Максим Костин (Ярапайкасси),
3-мĕшĕ Станислав Албутов (Кашмаш).

**2001 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем те старта тухрĕç. Çаксем çĕнтерчĕç:**

***Хĕр ачасем***

1-мĕшĕ Анжела Федорова (Муркаш),
2-мĕшĕ Наталия Иванова (Сосновка),
3-мĕшĕ Мария Охлина (Калайкасси).

***Арçын ачасем***

1-мĕшĕ Сергей Белов (Муркаш),
2-мĕшĕ Игорь Павлов (Çатракасси),
3-мĕшĕ Владимир Кудряшов (Калайкасси).

**1999 – 2000 çулсенче çуралнисем тупăшрĕç. Çаксем мала тухрĕç:**

***Хĕр ачасем***

1-мĕшĕ Анна Милютина (Муркаш),
2-мĕшĕ Александра Вастрейкина (Калайкасси),
3-мĕшĕ Кристина Петухова (Калайкасси).

***Арçын ачасем***

1-мĕшĕ Стас Степанов (Çатракасси),
2-мĕшĕ Дмитрий Макаров (Туçи Мари),
3-мĕшĕ Александр Сорокин (Калайкасси).

**1997 – 1998 çулсенче çуралнисем хушшинче çаксем палăрчĕç:**

***Хĕр ачасем***

1-мĕшĕ Светлана Соколова (Ярапайкасси),
2-мĕшĕ Анастасия Ксенофонтова (Калайкасси),
3-мĕшĕ Нина Петрова (Нискасси).

***Арçын ачасем***

1-мĕшĕ Никита Николаев (Калайкасси),
2-мĕшĕ Кирилл Поствайкин (Туçи Мари),
3-мĕшĕ Николай Горбунов (Туçи Мари).

Хысçăн старта предприятисемпе учрежденисен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем е вĕсен çумĕсем тухрĕç. Пĕтĕмпе 18 çын пулчĕ ку ушкăнра.

Хĕрарăмсем хушшинче чупса Анастасия Костина çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшĕ – Джамиля Баранова, виççĕмĕшĕ – Анастасия Александрова.

Арçынсем хушшинче чупса пĕрремĕш вырăна Анатолий Иванов тухрĕ. Иккĕмĕшĕ – Павел Еронов, виççĕмĕшĕ – Николай Иванов.

Ветерансем те старта тухмасăр чăтаймарĕç. Хĕрарăмсенчен Тамара Александрова çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшĕ – Раиса Любимова, виççĕмĕшĕ – Лариса Смирнова. Арçынсенчен Ипполит Лобанов пĕрремĕш пулчĕ. Иккĕмĕшĕ – Станислав Федоров, виççĕмĕшĕ – Владимир Кольцов.

Ăмăртăва хутшăннă Арсений Прокопьев (2010 çулта çуралнă) чи çамрăк участник ятне тивĕçрĕ. Чи асли Станислав Федоров пулчĕ.

Командăсен пĕтĕмлетĕвĕпе результатсем çапла пулчĕç. Вăтам шкулсем хушшинче Калайкасси шкулĕ çĕнтерчĕ, кубока тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ – Муркаш шкулĕ, виççĕмĕшĕ – Çатракасси шкулĕ.

Тĕп шкулсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Шетмĕпуç шкулĕ тухрĕ, кубока тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ – Сосновка шкулĕ, виççĕмĕшĕ – Тойкилтĕ шкулĕ.

Предприятисемпе учрежденисен, ял тăрăхĕсен командисем хушшинче Муркаш ял тăрăхĕ çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшĕ – Катькас ял тăрăхĕ, виççĕмĕшĕ – Ильинка ял тăрăхĕ.

Ăмăртусенче мала тухнисене паллă спортсменсем Алина Иванова, Нина Охотникова, Вера Соколова чысларĕç, ăнăçусем сунчĕç.

**А. ИВАНОВ.**

**Т. Яковкина, А. Тихонов сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Агробизнес аталанăвĕ куллен тимлĕх ыйтать

**Фермăсене хĕле епле хатĕрленине тĕрĕсленин пĕтĕмлетĕвĕ**

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**– Хуçалăхсенче янтăланă апатăн пахалăхĕ еплереххи пирки калайратăр-и? Тĕрĕслеттернĕ-и ăна?**

– Ку ыйтăва эпир нихăçан та иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр, мĕншĕн тесен агробизнес аталанăвĕ куллен тимлĕх ыйтать. Хуçалăхсенчи специалистсем те ăна тĕрĕс ăнланни пĕрлехи ĕçсен çулĕсене уçса пырать кăна. Авăн уйăхне кĕриччен районти пур хуçалăх та хăйсем çу каçа хатĕрленĕ апат тĕслĕхĕсене тĕрĕслеттерме республикăри ветеринари лабораторине çитерсе пачĕç. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕ çакăн пек: янтăланă утăн 62 проценчĕ пĕрремĕш класлă, 34 проценчĕ – 2-мĕш класлă, 4 проценчĕ – 3-мĕш класлă. Тĕрĕслеве тăратнă 2,5 пин тонна силос 100 проценчĕпех 1-мĕш класлă. Çак апатпа пĕрлех малтарах хатĕрленĕ сенажа та 5,2 пин тонна («Восток», «Герой», «Ударник», «Путь Ильича» хуçалăхсен) тĕрĕслеттертĕмĕр. Апатăн 45 проценчĕ – 1-мĕш класа, 38 проценчĕ – 2-мĕш класа, 17 проценчĕ 3-мĕш класа тивĕçтерчĕ. Кĕçех каярах вăхăтра янтăланă апат пахалăхĕ те паллă пулмалла. Вĕсем те пит хĕретмелле пулмасса шанатăп эпĕ.

**– Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ тивĕçлĕ шайра аталантăр тесен хĕле те производствăна чакарса ямалла мар. Çавăнпа та хĕл кунĕсем çывхарни пирки калаçнă май чăн малтанах районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенче кăçалхи хĕле выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк йышĕ еплерех хисеппе кĕнине пĕлес килет. Эсир хирĕçлеместĕр пуль?**

– Авăн уйăхĕ вĕçленсе пынă май сивĕсем çывхарнине кашни кунах хăварах сисетĕр ĕнтĕ. Эсир фермăсене хĕле хатĕрленипе интересленнипе, сирĕн шухăшăрпа тата ыйтăвăрпа килĕшетĕп, мĕншĕн тесен фермăсене хĕле хатĕрлесси çинчен калаçма пуçласан çак ыйту малтанах выльăхсене пырса тивни пирки час-часах манатпăр. Вырăнсенче ку тĕлĕшпе çулсеренех нумай ĕç туса ирттеретпĕр. Ахальлĕн майĕ те çук. Кĕркуннехи-хĕллехи тапхăр выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче чи ответли шутланать. Çак вăхăта ыранхи кунпа пурăнакансем фермăсене те, выльăхсене те тухăçлă хĕл каçарма хатĕрлесе çитереççĕ. Ку чухне зооветеринари правилисене пăхăнмасан выльăхсен тĕрлĕ чирĕсене çул уçăласси, продуктивлăх чакасси пирки те иккĕленÿ çук. Выльăхсене çарантан сарайне кĕртнĕ вăхăтра таврари сывлăш температури улшăнни уйрăмах çамрăк выльăхсемшĕн сиенлĕ пулма пултарать. Çакна шута илсе хĕле хатĕрленнĕ тапхăрта фермăсенче хуçалăх ĕçĕсене туса ирттерни хушăрах планпа пăхнă зооветеринари ĕçĕсене те сиктерме юрамасть.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенчен тăратнă статистика пĕтĕмлетĕвĕпе кăçал майракаллă шултра выльăхсем пĕлтĕрхинчен ытларах, сыснасем палăрмаллах хĕл каçма сахаллăн кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ çулталăк хушшинче 4692 пуçран 5053-не çитрĕ. Çакăнта куллен укçа паракан ĕнесен йышĕ палăрмаллах пысăкланни вырă шанчăк çуратать: ĕнесен кĕтĕвĕ пĕлтĕр 2008 пуç пулнă пулсан, кăçал – 2214 пуç. Кунти тĕп ÿсĕм «Путь Ильича» агрофирма аталанăвĕпе çыхăннă. Асăннă хуçалăх çĕнĕ ферма çĕкленипе ĕнесен кĕтĕвне те 70 пуçран 378 пуçа çитерме пултарчĕ. Суворов яч. хис. хуçалăх çулталăк хушшинче 11 ĕне хушни те (211 пуç) ĕçлекенсен малалла пăхни пирки калать. Сыснасен кĕтĕвĕ вара уйăх пуçланнă тĕле 2828 пуç юлчĕ. Ку вăл çулталăк каяллахинчен 2252 пуç сахалрах.

Уйрăм сăмах чăх-чĕп пирки. Ку отрасле паян района «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче тата «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, С. Юхтановăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче аталантараççĕ. Пĕрремĕшсем кăçал чăхсен йышне 2340 пуç чакарчĕç пулсан (270022 пуç чăх-чĕп пур), иккĕмĕшсем 50 пуç хушма хăват çитерчĕç (5100 пуç).

**– Сивĕ кунсем çывхарнă май ĕнесене витесене кĕртме те вăхăт çитет. Тĕрĕслевсенче витесемпе сарайсем выльăхсене йышăнма хатĕрри курăнчĕ-и? Камсем çаврăнăçуллăрах пулнă-ха хĕле хатĕрленессипе?**

– Выльăх-чĕрлĕх пăхас технологие пăхăнакансен çу каçа улăх-çаранта кĕтÿре çÿренĕ ĕнесене чăнах та вăхăтра витесене тăратмалла. Çакă та продуктивлăха сыхласа хăварассипе çыхăннă. Кунта манăн район администрацийĕн хушăвĕпе июль – август уйăхĕсенче фермăсене хĕле хатĕрлессипе ятарлă тапхăр йĕркелени пирки каласа хăварас килет. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче çак уйăхăх «Путь Ильича» агрофирмăра, Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., «Оринино», «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе И. Черновăпа А. Афанасьева хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ахаль ирттермени курăнчĕ. Кунти фермăсене хĕле хатĕрленнисе пысăк калăпăшлă ĕçсем пурнăçласа хевте çитернĕ. Ыттисен вара ыррине ĕмĕтленмелли çеç юлать.

**– Ĕнесене хĕллехи тапхăра кĕртнĕ май вĕсен чĕрнисене касасси те иккĕмĕш пĕлтерĕшлĕ ĕç мар...**

– Тĕрĕсех асăрхаттартăр. Чĕрне ÿссе кайни ĕнен продуктивлăхне чакарать. Çавăнпа та чĕрне касассине çулталăкне икĕ хут йĕркелени пĕрлешÿллĕ хуçалăхсене сĕт продуктивлăхне тивĕçлĕ шайра тытма пулăшать.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

# Отсрочка валли камăн право пур?

## Эсир пĕлесшĕнччĕ

***Çамрăк çынсемпе вĕсен çемье членĕсем хушшинче Раççей Федерацийĕн çын прависен уполномоченнăйĕнчен Владимир ЛУКИНРАН çара каяссинчен отсрочка илме камăн право пурри пирки ăнлантарса пама ыйтакансем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Кун пирки вăл çапла хурав парĕ:***

– Призывпа çара каяссинчен отсрочка пани вăл – çара кайма тивĕç çынна ку е вăл сăлтава пула çар тивĕçне пурнăçлассинчен уйрăм тапхăрлăх хăтарни. Кун пек сăлтавсен шутне çемьери лару-тăру, вĕренни, патшалăх тивĕçĕсене пурнăçлани, призыв тапхăрĕ тĕлне çыннăн сывлăхĕ тивĕçтерменни пулма пултараççĕ.

Призыв çулне çитнĕ граждансен прависемпе тивĕçĕсене палăртакан тĕп норматив акчĕ вăл Раççей Федерацийĕн «Çар тивĕçĕ тата çар службин çинчен» Саккунĕ пулса тăрать. Саккунпа килĕшӳллĕн çаксене отсрочка параççĕ:

– сывлăхĕ тĕлĕшпе çар службине кайма вăхăтлăх юрăхлă мар тесе йышăннисене – 1 çулталăк таран;

– ашшĕне, амăшне, мăшăрне, тăван пиччĕшне е шăллĕне тата тăван аппăшне е йăмăкне, аслашшĕне, асламăшне вĕçĕм пăхса пурăнакансене (саккунпа килĕшӳллĕн вĕсене пăхса пурăнма тивĕççисем урăх никам та çук пулсан тата кун пек çынсене пăхса пурăнассине патшалăх пĕтĕмпех хăйĕн çине илмен пулсан);

– çул çитмен шăллĕн е çул çитмен йăмăкĕн опекунĕ шутланакансене (саккунпа килĕшӳллĕн вĕсене пăхса пурăнма тивĕççисем урăх никам та çук пулсан);

– амăшĕсĕр пăхса ӳстерекен ача пуррисене;

– икĕ е ытларах ачаллисене;

– виçĕ çула çитмен инвалид ача пуррисене;

– çемьере ача пур тата мăшăрĕн çие юлни 26 эрнерен кая мар чухне.

Хăш-пĕр чухне служба тивĕçĕсене пурнăçлакансене те отсрочка пама пултараççĕ. Калăпăр, шалти ĕçсен органĕсенче е ытти органсенче службăра тăнă чухне, çавăн пекех патшалăх влаç органĕсене суйланисене (полномочи вăхăчĕ тухиччен), суйлавпа йышăнмалли должноçе суйлама кандидата тăратнисене.

Çавăн пекех вĕренӳ учрежденийĕсенче очнă майпа вĕренекенсен те отсрочка илме право пур, анчах та ку учрежденин патшалăх аккредитацийĕ пур пулсан тата вĕреннĕ тапхăрлăх кăна. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

– пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илекенсем (20 çула çитиччен);

– 11 класс мар, 9 класс вĕренсе пĕтернĕ колледж (техникум) студенчĕсем (20 çула çитиччен);

– 11 класс вĕренсе пĕтернĕ колледж (техникум) студенчĕсем, вĕсем вĕренекен юлашки çулта призыв вăхăчĕ çитет пулсан;

– аслă вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсем (унччен вĕсем 18 çул тултарнă май отсрочка илмелли правăпа усă курман, бакалавриатпа магистратура тата специалист хатĕрлемелли программăпа вĕренеççĕ, специалист дипломĕ илмен пулсан);

– аспирантсем, енчен те вĕсем аслă вĕренӳ заведенийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн аслă тата хушма професси пĕлĕвĕн учрежденийĕсенче, наука организацийĕсенче вĕренĕве малалла тăсаççĕ пулсан;

– РФ Президенчĕн указĕпе килĕшӳллĕн призывран отсрочка панă çынсем.

Раççей Федерацийĕн «Çар тивĕçĕ тата çар службин çинчен» Саккунĕн уйрăм положенийĕсенче вĕреннĕ вăхăтра, академи отпускĕ илнĕ чухне, урăх вĕренӳ заведенине вĕренме куçнă чухне, çĕнĕрен вĕренме пуçăннă чухне тата ытти тĕслĕхсенче отсрочка илмелли право пирки туллин ăнлантарса панă.

# Чĕрĕлĕх паракан таса Хĕрес праçникĕ

Туррăн таса Хĕресне тупнине, Ăна халăха çĕклесе кăтартнине чиркӳре авăн уйăхĕн (сентябрĕн) 27-мĕш кунĕнче асăнаççĕ.

Христоса ĕненекенсене иудейсем те, суя тĕнлĕ халăхсем те 300 çула яхăн асаплантарса хĕсĕрлесе пурăннă. Çав йывăр самана нумайăшне тĕн пирки асаплантарса вĕлернĕ. Римра аслă Константин патша пулса тăнă вăхăтра вĕсене хĕсĕрлеме чарăннă. Вăл Христоса ĕненекенсем хутне кĕрсе тăнă, хăй патшалăхĕнче Христос тĕнне пур тĕнсенчен те мала кăларнă.

326-мĕш çулта Константин патша Çăлакана пăталанă хĕресе шыраса тупасшăн пулнă. Çав шухăшпа вăл хăйĕн амăшне Еленăна Иерусалима янă. Унта пырсан Елена Иисус Хĕресĕ çинчен нумай ыйтса тĕпченĕ. Христос Хĕресне çĕре чавса пытарнă вырăна ăна пĕр ватă еврей кăтартнă. Çав вырăна чавса пăхнă та, унта виçĕ хĕрес тупнă. Анчах çав виçĕ хĕресрен Христос хĕресĕ хăшĕ иккенни паллă пулман. Çав вăхăтра пĕр вилнĕ çынна илсе пынă. Çак хĕрессене пĕр-пĕрин хыççăн вилнĕ çын çине хурса пăхнă. Икĕ хĕресĕнчен нимĕнле хăват та пулман, виççĕмĕш хĕресне хурсан вилнĕ çын чĕрĕлсе тăнă. Çавăн тăрăх вара ку хĕрес чăнахах та Христос Хĕресĕ иккенне пĕлнĕ те, Ăна пуç çапса чуптăва пуçланă. Унта халăх пит йышлă пулнă, пурте вĕсем Хĕрес патне пырайман. Вара ун чухнехи Иерусалим хулин патриархĕ Макарий, пĕр çӳллĕ вырăн çине улăхса тăнă та, Туррăн Хĕресне халăха çĕкле-çĕкле кăтартнă. Халăх Хĕресе курмассерен: «Эй Турă, çырлах», – тесе пуç çапнă.

Хĕрес çинче çакăнса вилсе Иисус Христос пире шуйттан ирĕкĕнчен çăлнă. Хĕрес çинче юнне юхтарса, Хăйĕн çылăхсăр пурнăçне çылăхлă этемлĕхшĕн Атте Турра парне кӳрсе, пире, çылăхлă этеме, Атте Турăпа мирлештернĕ, Çĕнĕ Килĕшӳ тунă. Хĕрес çинче пăталанса вилсе пире çылăхшăн тивнĕ ылханран хăтарнă, çылăх пирки вилес вилĕмрен çăлнă. Çавăнпа Христос çыннисемшĕн Хĕрес пит паха япала. Хĕресре Турă хăвачĕ пур. Çав хăват этеме усал сывлăшсенчен хăтарса тăрать. Эпир хĕрес паллине çавăнпа пур çĕрте те, пур вăхăтра та тăватпăр.

**Йӳçкасси чиркĕвĕн настоятелĕ Сергий атте.**

Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка, установка – бесплатно. СКИДКИ.
Тел.: 8-927-844-78-11. 8-10.

Спутниковое цифровое телевидение
ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб.
ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 3-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 7-33.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-10.

## Прогноз погоды

| | среда 25 сентября | | | | четверг 26 сентября | | | | пятница 27 сентября | | | | суббота 28 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +8 | +9 | +10 | +7 | +7 | +6 | +7 | +3 | +4 | +4 | +6 | +3 | +4 | +3 | +3 | +2 |
| Давление мм | 727 | 726 | 727 | 729 | 732 | 735 | 737 | 739 | 740 | 742 | 742 | 742 | 739 | 736 | 735 | 737 |
| Влажность % | 92 | 86 | 83 | 98 | 96 | 89 | 80 | 93 | 93 | 74 | 52 | 83 | 93 | 94 | 92 | 100 |
| Ветер м/сек | 5 | 5 | 3 | 3 | 4 | 5 | 6 | 4 | 3 | 5 | 3 | 3 | 5 | 7 | 7 | 6 |
| | Ю | Ю-В | Ю-З | З | З | З | З | З | З | Ю-З | Ю-З | В | В | С-В | С | С-З |
| Солнце восход / заход | | 06:45 | 18:43 | | | 06:47 | 18:40 | | | 06:49 | 18:38 | | | 06:51 | 18:35 | |
| Луна восход / заход | | 21:25 | 13:34 | | | 22:15 | 14:24 | | | 23:11 | 15:06 | | | 00:14 | 15:39 | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ ГРАЖДАН 3-10.
КапиталЛ
Поможем и приумножим!
Выгодный вид сбережений 29%
от 10 000 до 700 000 руб., от 6 месяцев до 3 лет***
ПРИНИМАЕМ СБЕРЕЖЕНИЯ
ВЫДАЕМ ЗАЙМЫ ОТ 3,1%
КПКГ "КапиталЛ" удерживает налог на доходы физических лиц с начисленных процентов, в соответствии с Налоговым кодексом РФ
При досрочном расторжении договора процентная ставка рассчитывается по программе "До востребования", 6% годовых.
*** Данный вид сбережений доступен каждому члену КПКГ "КапиталЛ"
г. Чебоксары, пр. Московский, д. 14, 2 этаж
с. Моргауши, ул. Мира, д. 5а
8-927-990-93-10
8(8352)222-830
kapital-21.ru, kpk_kapital@list.ru
КПКГ "КапиталЛ" является членом саморегулируемой организации "Межрегиональный союз кредитных кооперативов".
КПКГ "КапиталЛ" только для членов кооператива, подробности по телефонам.

Цифровое спутниковое телевидение
ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб.
Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 6-10.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 6-25.

ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ.
Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 20-21.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 5-10.

* * *

Требуются рабочие для сборки корпусной мебели в с. Моргауши.
Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 2-2.

* * *

Закупаю бычков 200–250 кг на откорм по высоким ценам. Тел.: 8-927-865-41-24. 1-2.

* * *

Продаю пшеницу – 9 руб. за 1 кг, ячмень – 8 руб. за 1 кг, ЭКД (комбикорм) – 18 руб. за 1 кг (оптом – 16 руб. за 1 кг).
Тел.: 8-927-868-34-65.

* * *

В сельскохозяйственное предприятие «Ударник» требуются: зоотехник, доярки, скотники, механизаторы. Семейным предоставляется трехкомнатная квартира, а одиноким – благоустроенное жилье. Тел.: 8-917-670-72-49, 8-905-343-16-64. 7-10.

* * *

Март уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр.
Тел.: 8-903-064-52-99.

* * *

Ĕне, чупнă тынашкисем (ноябрьте, декабрьте пăруламалла, пурте хура тĕслĕ) сутатăп. Тел.: 8-927-853-61-03. 1-2.

Продаю пшеницу. Тел.: 8-987-672-79-58. 2-2.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 12-12.

* * *

Закупаю лошадей, коров, телят.
Тел.: 8-905-198-14-26. 1-2.

* * *

Молодая семья срочно снимет квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-848-81-85, 8-937-395-71-49.

* * *

Организации требуются: каменщики, монолитчики – з/п от 50 тыс. руб.; гипсокартонщики – з/п от 60 тыс. руб. Проживание, питание – бесплатно. Оформление официальное. Тел.: 8-987-667-25-60, 8-927-847-61-66. 1-2.

* * *

Продаю березовые дрова.
Тел.: 8-903-065-58-68. 3-3.

* * *

Продаем зернофураж: пшеница – 9 руб., ячмень – 8 руб., рожь – 6 руб., горчица – 40 руб. за 1 кг.
Тел.: 8-987-760-57-71. 1-5.

* * *

Качакапа путеккине сутатăп.
Тел.: 8-905-199-53-41.

"ВИКТОРИЯ-ОКНА"
ЗАМЕР, ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО 7-10.
СРОК ИЗГОТОВЛЕНИЯ 3-5 ДНЕЙ
АКЦИЯ БАНКА: весь месяц сентябрь кредит на окна без процентов.
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
ГАРАНТИЯ
КРЕДИТ
РАССРОЧКА
СКИДКА до 35%
7-е окно в ПОДАРОК
REHAU Unlimited Polymer Solutions, brusbox, KBE, ARTEC оконные системы
Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной).
Тел.: 62-1-20, 8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.

Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 3-10.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают глубокое соболезнование бухгалтеру Большесундырского райпо Актуловой Г.А. и заведующей Чураккасинского магазина «ТПС» Перцевой Е.А. в связи с тяжелой утратой – смертью отца

**ПЕРЦЕВА**
**Апполона Кузьмича.**

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ кунта математикăна вĕрентекен Н.Н. Максимовăн шăллĕ

**Сергей Николаевич**
**ЯРАНСКИЙ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăккаххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 24.09.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4771.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.